*Çĕмĕрлери обществăпа политика хаçачĕ*

# Маяк

2010
ноябрĕн
19-мĕшĕ
ЭРНЕКУН

*№ 173-176*
*(10578-10581)*

Сутмалли хакĕ ирĕклĕ.

1935 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

www.VPERED21.ru

# Патриотизм урокĕ

***Ноябрĕн 16-мĕшĕнче хăнасене таравăт Çĕмĕрле çĕрĕ пĕтĕм Раççейри "Боевое братство" обществăлла организацин Пушкăрт Республикинчи "Симĕс беретсем" вокалпа инструментсен ансамблне йышăнчĕ. Ушкăн концерчĕ "Восход" культура керменĕнче иртрĕ, тĕрлĕ çулти хула çыннисене йышăнчĕ – кĕçĕн классенчи шкул ачисенчен пуçласа çÿçĕ кăвакарнă ватăсем таранах.***





"Симĕс беретсем" вунă çул ĕнтĕ çĕршыв тăрăх концертсемпе çÿреççĕ. Пухăннă укçатенкĕне Афганистанра, Чечняра, ытти "вĕри" вырăнсенче çапăçса пуçне хунă воинсене асăнма яраççĕ. Концертра пухăннă укçапа Çĕмĕрле хулинчи çапăçура пуç хунă, хыпарсăр çухалнă воин-интернационалистсене асăнса та мемориал хăмисем хатĕрленĕ: Игорь Комиссаркин (1995 ç. пуç хунă), Алексей Юрчков (1997 ç. пуç хунă), Дмитрий Перовпа Александр Цаплин (1999 ç. пуç хунă), Николай Каменев (2000 ç. пуç хунă), Эдуард Сатлайкин (2002 ç. пуç хунă). Çак асăну хăмисене Çĕмĕрле каччисем салтака кайиччен вĕреннĕ вĕрентÿ учрежденийĕсен ертÿçисене пачĕç.

Çакăн пек ирĕклĕ лару-тăрура пирĕн хĕрачасемпе арçын ачасене патриотизм урокĕ пачĕç. Вăл ăса вĕрентсе ирттернĕ çĕр-çĕр класс сехетĕнчен те витĕмлĕрех. Аслă ăру представителĕсем вара тепĕр хут вăрçă çулĕсене аса илчĕç, çамрăк ăрушăн нихăçан та çакăн пек хаяр самана ан пултăр тесе сунчĕç.

Ку мероприяти – чунсăр пулманнин, шанчăклăхпа тивĕçе ăнланнин çутă тĕслĕхĕ, астăвăм текен пысăк çулăмăн хĕлхемĕ.

**А. КАШИРИНА.**

### ПИРĔН СПРАВКА

**"Симĕс беретсем" ансамбле 2000 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче йĕркеленĕ. Çавăнтанпа музыкантсем концертсемпе пĕтĕм Раççейĕпех пулнă. Ушкăн йышĕнче – Р. Фазлиахметов тата И. Муллаянов, иккĕшĕ те Пушкăртстанри Дюртюли хулинче çуралса ÿснĕ. Рашат – ушкăн ертÿçи, запасри старшина. "Беркут" ятарлă разведка подразделенийĕн командирĕн çумĕ пулнă. Службăра тăнă çулсенче Арменире, Грузире, Абхазире, Çурçĕр Осетире, Чечняра пулнă. Ирек – запасри сержант, Грузипе Абхази чиккинче службăра тăнă. Ушкăнăн музыканчĕ тататашăçи – А. Шагриянов.**

# Итлев иртрĕ

**Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Çĕмĕрле районĕн 2011 çулхи бюджечĕн проекчĕ пирки халăх итлевĕ иртрĕ.**

Район администрацийĕн финанс пайĕн начальникĕн çумĕ Е.В. Медведева Депутатсен Пухăвĕн "Çĕмĕрле районĕн 2011 çулхи бюджечĕ çинчен" решенийĕн проекчĕ çинчен тунă доклада итленĕ тата сÿтсе явнă хыççăн халăх итлевне хутшăннисем проекта Чăваш Республикин 2011 çулхи бюджечĕн тĕп енĕсемпе тата Чăваш Республики Президенчĕн бюджет Çырăвĕнчи тĕллевсемпе килĕшÿллĕн хатĕрленине палăртрĕç.

Район бюджетĕнчи тупăшсен прогнозлакан калăпăшĕ 111,808 млн. тенкĕпе танлашать, вăл шутра каялла таврса памалла мар килсе кĕрекен тупăшсем – 96,669 млн. тенкĕ; бюджетăн пĕтĕмĕшле тăкак пайĕ – 112,228 млн. тенкĕ. Çĕмĕрле районĕн бюджечĕн прогнозлакан дефицичĕ 420 пин тенкĕпе танлашать.

Халăх итлевне хутшăннисем хăйсен сĕнĕвĕсемпе асăрхаттарăвĕсене Депутатсен Пухăвĕн бюджет тата экономика, суту-илÿпе обществăлла апатлану, предпринимательствăна аталантарас, çĕр тата пурлăх хутшăнăвĕсем енĕпе ĕçлекен комиссине ярса пама, Çĕмĕрле районĕн Депутатсен Пухăвне "Çĕмĕрле районĕн 2011 çулхи бюджечĕ çинчен" ыйтăва сÿтсе явмашкăн тăратма сĕнсе решени йышăнчĕç.

**Л. САЕРОВА.**

# 2011 çулхи бюджет: перекетлемелле, çĕнĕ майсем шырамалла

**Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Çĕмĕрле хулин Депутатсен пухăвĕн "Çĕмĕрле хулин 2011 çулхи бюджечĕ çинчен" йышăнăвĕн проектне халăхпа сÿтсе яврĕç.**

Хулан тĕп финанс документне кашни çулах общественноçпа анлăн сÿтсе явнă хыççăн йышăнаççĕ. Итлеве хутшăнакансем хăйсене кăсăклантаракан ыйтусене пама пултарчĕç, вĕсем çине уçăмлă хуравсем илчĕç. Пухăннисем хулан тĕп финанс документне ырларĕç. Тĕплĕнрех ăна депутатсен комиссийĕсен ларăвĕсенче сÿтсе явĕç, ун хыççăн депутатсем татăклă решени йышăнĕç.

*2 стр.*

## Çамрăк специалистсем валли

Иртнĕ эрнере РФ Ял хуçалăх министерствипе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çĕнĕ килĕшÿ тунă. РФ Правительстви ялсенче çурт-йĕр çавăрма – 40 млн., çав шутра çамрăк специалистсене пурăнмалли вырăна лайăхлатма 20 млн. тенкĕ уйăрĕ.

Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствинче пĕлтернĕ тăрăх, кăçал Чăваш Енри ял çыннисем, çав шутра çамрăк çемьесемпе специалистсем валли пÿрт тума Федерацирен 79 млн. тенкĕ илнĕ. Республикăн кăçалхи бюджетĕнче 62,3 млн. тенкĕ пăхса хăварнă. 2010 çулта çурт-йĕр çавăрмашкăн социаллă тÿлев илме 299 çемьене, çав шутра 127 çамрăк çемьепе специалиста свидетельство пана.

## Паянхи номерте:

ТВ ПРОГРАММА

2011 çулхи бюджет: перекетлĕх çулĕпе. — 2 стр.

Патшалăх налук служби – 20 çулта. — 3 стр.

Вылĕх-чĕрлĕх çине шанăç. Типĕ çанталăка пăхмасăр районти малта пыракан хуçалăхсем вылĕх-чĕрлĕх йышне упраса хăварчĕç кăна мар, ÿстерчĕç те. — 4 стр.





Пенси çулĕ ÿсмест. Президент шантарать. — 5 стр.



Сахал канатăн-и? Ĕçрен кăларма пултараççĕ! — 11 стр.



Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем: правине çирĕплетме васкăр! — 12 стр.

# ГАИ ыйту лартать



**Патшалăх автоинспекцийĕ ноябрĕн 20-мĕшĕн-чен пуçласа водитель пулас текен кандидатсене çĕнĕ билетсемпе экзамен тыттарать. “A”, “B”, “C” тата “D” категорисен билечĕсем хатĕр тата вĕсене çирĕплетнĕ ĕнтĕ.**

Çакă законодательствăна тата Çул-йĕр правилисене нумай улшăну кĕртнипе çыхăннă. Сăмах çуран çÿрекенсене, çаврăмра çÿрессине, хăрушсăрлăх пиçиххийĕсемпе усă курассине, фарăсен çывăхри çутине, пыракан машинăран иртсе каймалли правилăсене тата ытти ыйтусене пырса тивекен улшăнусем пирки пырать.

Экзаменсене çĕнĕ билетсемпе 2010 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа тыттараççĕ, мĕншĕн тесен çав кунран çаврăмпа çÿремелли урам хĕресленĕвĕ витĕр иртмелли йĕрке улшăнать. Ноябрĕн 21-мĕшĕнче Административлă право кодексне улшăнусем вăя кĕреççĕ. Ку улшăнусене çулăн хирĕç пымалли енĕ çине тухса кайнă тĕслĕхсене сирсе ярас тĕллевпе кĕртнĕ. Вĕсем çул-йĕр аварийĕсенче тĕп виçĕ сăлтав шутне кĕреççĕ. Видеокамерăпа ÿкерсе илнĕ хирĕç пымалли çул çине тухса кайнă тĕслĕх йĕркене пăсаканшăн 5 пин тенке ларать.

Çĕнĕ экзамен билечĕсенче ыйтусемпе пĕрле паракан ÿкерчĕксен пахалăхне ÿстернĕ. Çакна компьютер графикипе тата çул-йĕр участокĕсенче , юнашарти территорисенче тунă ÿкерчĕксемпе усă курнипе тума май килнĕ. Урăхла каласан, халĕ алăпа тунă ÿкерчĕксем пулмаççĕ.

Унсăр пуçне, çĕнĕ билетсене хатĕрленĕ чухне автошкулсен, обществăлла пĕрлешÿсен, çавăн пекех автолюбительсен сĕнĕвĕсене шута илнĕ. Экзамен билечĕсенчен тĕрлĕрен ăнлантарма пулакан тата тавлашуллă ыйтусемпе хуравсене кăларнă.

**RG.ru**

## Пĕрремĕш йĕкĕреш çуралнă

Ача çурални – яланах пысăк савăнăç. Харăсах икĕ ача çурални вара – икĕ хут телей. Çĕмĕрлере пурăнакан Артемпа Елена Мищенкосен çемйинче ноябрĕн 8-мĕшĕнче шăпах çакăн пек савăнăçлă пулăм пулчĕ – йĕкĕрешсем çуралчĕç. Ашшĕпе амăшĕ пепкисене Маргарита тата Роман ятсем панă.

Хула администрацийĕн ЗАГС пайĕн ĕçченĕсем пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 11-мĕшĕнче телейлĕ мăшăра пепкисен пĕрремĕш документĕсене – çурални çинчен калакан свидетельствисене панă.

**Хамăр инф.**

● *Сывлăх*

## Çĕр тĕрлĕ чиртен пулăшать

Чĕрĕ сухан апат çиес килнине ÿстерет, апата ирĕлтерессине лайăхлатать. Ăна çисен апата ирĕлтерекен сĕткен ытларах тухать. Сухан пÿрери хăйăра, чулсене ирĕлтерме пулăшать.

Халăх медицининче пуçлă сухан ерекен чирсемпе аптрасан лайăх витĕм кÿнине палăртнă. Мĕншĕн тесен унта хăш-пĕр кăмпана, вируса тата чир пуçаракан микробсене тĕп тăвакан фитонцидсем пур.

Ангина, грипп, ÿпке шыççи, туберкулез чухне çакнашкал рецепт питех те витĕмлĕ: пуçлă сухана теркăпа хырмалла, вĕрекен сĕт ямалла, 1 апат кашăкĕ çăка пылĕ ирĕлтермелле. Сĕте çĕрле çывăрма выртас умĕн ĕçмелле. Вĕри сĕтпе, суханпа темиçе кун сипленмелле.

Ÿслĕк аптратсан пысăк пĕр сухана вĕтĕ турамалла, çĕрле 2 апат кашăкĕ çăка пылĕпе хутăштармалла, тепĕр кунне пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çимелле. Пысăк сухана çиеймесен сĕткенне ĕçмелле.

Вĕтетнĕ суханпа пыл «пăттине» марля çине хурса суран çине тытмалла. Вăл пÿрлĕ сурана тасатать.

Хăлхаран пÿр тухсан сухан сĕткенĕпе йĕпетнĕ мамăк тытмалла.

Суханăн тин хатĕрленĕ сĕткенĕпе стоматитран сипленнĕ чухне усă кураççĕ.

Çÿçе çирĕплетме пуç тирне сухан сĕткенĕ е сĕткенпе чечек тусанĕн (цветочная пыльца) хутăшне сĕрмелле.

Çÿç лĕкĕленсен сухан хуппин шĕвекĕ пулăшать. 25 грамм сухан хуппине вĕрекен çур литр шыва ямалла. 25 минутран сăрăхтармалла. Çак шĕвекпе чÿхенĕ хыççăн çÿç ылтăн пек йăлтăртатса тăракан пулать.

Шăнăр тăсăлсан вĕтетнĕ суханпа пыла хутăштарса ыратакан вырăна хумалла, çыхса çирĕплетмелле.

Халăх сиплевçисем ар хăвачĕ чаксан сухан витĕмлĕ пулнине палăртаççĕ.

Цингаран сипленес тĕллевпе сухан çимелле. 70 грамм симĕс сухан организма талăкра кирлĕ чухлĕ аскорбин йÿçекĕпе тивĕçтерет. Сухан усал шыçă аталанасран та усăллă.

## Сывлăш пÿлĕнсен, вăй-хал чаксан

2 апат кашăкĕ хурăн çулçине вĕтетмелле, вĕрекен пĕр стакан шыва ямалла. Çур сехетрен сăрăхтарса илмелле, çĕçĕ вĕçĕпе апат соди ямалла. Шĕвеке чĕре ĕçĕ япăхнипе сывлăш пÿлĕнсен кунне 3-4 хут ĕçмелле.

1 апат кашăкĕ хурăн кăчкине вĕрекен пĕр стакан шыва ямалла, 10 минут вĕретмелле. 3 сехетрен сăрăхтармалла. Апатчен 20 минут маларах кунне 3-5 хут ăшăлла ĕçмелле. Шĕвек вăй кĕртме пулăшать.

● *Районти археологи палăкĕсем*

# «Хола çоч» хулаш

## («Городищенский мыс»)

**Юлашки вăхăтра чăваш халăхĕн историйĕ, эпир пурăнакан чăваш Сăр тăрăхне ăçтан, мĕнле çынсем куçса килни çинчен тĕпчевçĕсем, ăсчахсем, çыравçăсем, таврапĕлÿçĕсем нумай ĕç çырчĕç. 600-800 çул каялла мĕн пулса иртни пирки тĕп архивсенче упранакан документсенче те пур.**

**Паянхи кăларăмра эпир сире, хаклă вулакансем, тимĕр ĕмĕрĕнчи археологи палăкĕпе – «Хола çоч», е вырăсла каласан «Городищенский мыс» палăкĕпе паллаштарасшăн. Пирĕн хăна – Çĕмĕрле районĕн маттур та хастар таврапĕлÿçи Анатолий Пояндаев.**

**– Анатолий Никанорович, чи малтанах çакнашкал ыйту çуралать: 2 – 3 пин çул каялларах эпир пурăнакан тăрăхра мĕнлерех пулнă-ши вара? Мĕнле халăх пурăннă, мĕн ĕçпе пурăннă вĕсем? Çак ыйтусем пурне те кăсăклантараççĕ пулĕ тетĕп.**

– Вĕсем çинчен çырса хунисем пур, паллах. Акă авалхи грексен çыравçи Геродот пĕр историллĕ ĕçĕнче Танаис (Дон) шывĕн леш енче, хальхи Раççей çĕршывĕнче, виçĕ тĕрлĕ пысăк халăх пурăннине палăртнă: савроматсем, будинсем тата тиссагетсем (е фессагетсем). Тиссагетсем ăçта пурăннине вăл тĕптĕрĕс çырса кăтартнă. Вĕсем Дон пуçламăшĕнчен çурçĕр-хĕвел тухăçнелле тата 3 пысăк юханшыв хушшинче вырнаçнă, «сунарпа, пулă тытса пурăнаççĕ», тенĕ. Хальхи эпир пурăнакан вырăнсем кĕреççĕ те «истори ашшĕ» асăннă документа.



Юлашки 100 – 150 çулта археологсем питĕ пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Рязань облаçĕнчи Спасск районне кĕрекен Городец сали патĕнче вĕсем хÿме туса пурăннă вырăна çĕр чавса тĕпченĕ. Лаша хатĕрĕн тимĕр япалисене, шăмăран, чултан тунă ĕç хатĕрĕсене, савăт-сапан (вĕсене тăмран тунă) ванчăкĕсене, сăнă, ухă вĕçĕсене тата ыттине питĕ нумай тупнă.

Археологсем керамикăна та тĕпченĕ. Вĕсене пирĕн эрăчченхи 1-мĕш пин çуллăхра тунине палăртнă. Çакăн пек хулашсем татах та нумаййине пĕлсе «городец культури» тесе ят панă çак культурăна. Савăт-сапана вĕсем типсе çитиччен пусма татăккипе пусса тĕрĕллĕ йĕрсем туса илемлетнĕ. Çавăнпах ăна теприсем урăхла пусма-тăм керамикин сийĕ теççĕ.

**– Республикăри ытти районсенче хулашсем пуррине илтнĕ-ха. Çĕмĕрле тăрăхĕнче ун йышшисем пур-и? Мĕншĕн пирĕн таврара вĕсем питĕ сахал?**

– Паянхи куна Çĕмĕрле районĕнче археологи палăкĕсем кашни ял тăрăхĕнчех пур. Вĕсем çинчен малашнехи номерсенче çырса кăтартăпăр. Манăн халĕ Эскетенпе Якуртушкăнь хушшинчи хулаш çинчен пĕр-ик сăмах каласа парас килет.

Ăна вырăнти халăх ĕлĕкренпех «Хола çоч» тет, çакăнти ялсем пулса кайнăранпах, пĕр 250-300 çул каяллах пулĕ тетĕп. Мĕншĕн тесен 1909 çулхи апрелĕн 23 мĕш кунĕнче И.Д. Никитин-Юркки тĕпчевçĕ дневникĕнче çырса хăварнă йĕркесем юлнă. Тексчĕ вырăсла: «23 апреля 1909 года между Эскидень, Егоркино и Пояндайкино – Хола соч. Атаевская волость, Курмышского уезда, от села Туван 3 версты, около Огаринкиной в 100 саж. на Север». Вăл, паллах, хулаш вырăнне ялти ват çынсем кăтартнипе тупнă.

1989 çулта Чăваш наукăпа ăслăлăх институчĕн наука сотрудникĕ Е.П. Михайлов Чăваш патшалăх университечĕн пĕрремĕш курс студенчĕсемпе археологи ĕçĕсем тума килнĕ. Тарăн алтмасăрах çиелтен кăна пăхса тухнă. 20 ытла керамика ванчăкĕ тупнă, вĕсем çинчен çырса кăтартнă. Теприсем картта-схема туса хатĕрленĕ. Тупнă материал городец культури вăхăтĕнчи пулнине палăртса тепĕр хут çирĕплетнĕ.




Çакăн йышши хулашсем, археологсем палăртнă тăрăх, Çĕмĕрле тăрăхĕнче татах та пур, анчах вĕсене Сăр вăрманĕсем пытарса усраççĕ. Халлĕхе унашкал экспедицисем урăх пулман-ха.

Халĕ малтан панă ыйту çине хуравлăп, «Хола çоч» (археологсем «Городищенский мыс» теççĕ) çинчен мĕн пĕлнине каласа парăп.

«Хола çоч» Кармал юханшывĕн пуçĕнче икĕ тарăн çырма пĕрлешнĕ сăмсахра вырнаçнă. Çырма тĕпĕнчен хулаш лаптăкĕн çÿллĕш 10 метр, сарлакăшĕ – 70 метр, тăршшĕ – 77 метр, крепость валĕсемпе – 90 метр. Хальхи футбол площадки пысăкăш. Çырма тĕпĕнче юханшыв юхать, çыранĕсем питĕ чăнкă, сăмсах енчен çывăхне пыма ниепле те май çук.

Ур (ров), валсем, сăмсах çинче шĕшкĕсемпе тĕрлĕ йывăçсем ÿсеççĕ. Тĕлĕнмелле, хулаш лаптăкĕ çинче, 2–2,5 пин çул иртнĕ пулин те, пĕр йывăç та ÿсмест. Феномен мар-ши ку? Археологсем те питĕ тĕлĕннĕччĕ. Периметр тăрăх шĕвĕртнĕ юман юпасенчен хÿме пулнă. Уй енчен тăшман тапăнса килсен, выльăхсене хулана хăваласа кĕртнĕ те пысăк алăка хупса хунă. Тен, кĕперне те илсе хунă. Халĕ çав вырăнта 2–3 метр тарăнăш канав юлнă. Ахăртнех, вăл тепĕр çавăн чухлех тарăн пулнă.

Çакăнта пурăннă халăх питĕ ĕçчен, паттăр пулнă. Хÿмисене те питĕ хăтлă тунă. Унчухне хулашра пĕр ратри çынсем пурăннă (3–4 сыпăкри тăвансем). Ытти ратсемпе çапăçнисем пулнă. Хÿме хушшинче кăна пурăнаймастăн вĕт ĕмĕрĕпе, рата малалла тăсмалли çинчен те шутланă, урăх хулашсемпе çыхăну тытма пуçланă. Хăш-пĕр чухне хĕрсемшĕн юнлă çапăçусем те пулса иртнĕ, вăйлăрах ратсем начартараххисене пăхăнтарнă. Вăйпах çапса аркатнă, хĕрĕсене, пурлăхĕсене çаратса кайнă.

Йывăç пĕренесене чутласа пÿртсем тума пĕлнĕ. Барак евĕр вăрăм пÿртсем пулнă, вĕсемех хулашăн кăнтăр енчи хÿми шутланнă. Вĕсем пĕр-пĕринпе тĕкĕнсех тăнă. Хĕвел тухăçĕнче вĕсем чÿк тунă. Хĕвеле, çут çанталăка тархасласа пуç çапса пурăннă. Хулашăн сăмсахĕнче тăшман тапăнса килесрен талăкĕпех сыхлавçăсем çÿллĕ вышка çинче хурал тăнă.

**Л. САЕРОВА**
калаçнă.

***(Вĕçĕ çитес номерте).***

## *“МАЛАЛЛА” хаçатăн чăвашла кăларăмне çырăнса илĕр!*

# ÇАНТАЛĂК ПРОГНОЗĔ

**НОЯБРЬ**

www.pogoda.chuvashia.com даннăйĕсем тăрăх

| | Шăматкун | Вырсарникун | Тунтикун | Ытларикун | Юнкун | Кĕçнерникун | Эрнекун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | 20 | 21 | 22 | 23 | 24 | 25 | 26 |
| | çумăр çукалать | йĕпе юр çума пултарать | йĕпе юр çума пултарать | юр çума пултарать | ăмăр | юр çума пултарать | пĕлĕтлĕ |
| К. | -3...+1 | -2...+2 | -1...+3 | -4...+1 | -4...+1 | -7...-9 | -10...-12 |
| Ç. | -5...-1 | -5...-1 | -5...-1 | -5...-2 | -7...-3 | -10...-12 | -15...-17 |

# САЛАМЛАТПАР!

**Уважаемую**
**КАЛЕНТЬЕВУ Валентину Николаевну**
**С ЮБИЛЕЕМ!**



*Две пятерки в юбилее!*
*Поздравлять спешим скорее.*
*Нам отличники нужны.*
*Уважаем знанья мы.*
*В жизни все у Вас на «пять».*
*Можем даже доказать:*
*За старанье и уменье ставим «пять».*
*За спокойствие, терпенье –*
*тоже «пять».*

*За заботу и вниманье,*
*Дружбу, помощь, состраданье*
*Тоже ставим только «пять».*
*Даже целых «двадцать пять»!*
*За детей и за внучат,*
*И за дом, где мир да лад -*
*Вам еще пятерок ряд.*
*В сумме будет пятьдесят.*
*И еще пятерка Вам,*
*Что бодра не по годам.*

*И желаем Вам и впредь*
*Не стареть, а молодеть.*
*Ряд пятерок умножать*
*Да в достатке поживать*
*Без унынья и проблем,*
*Нужной быть всегда и всем.*
*Поздравляем с юбилеем!*
*Станет жизнь еще светлее!*

**Коллектив магазина «Салампи».**

**Дорогую, любимую маму, бабушку, прабабушку**
**ГОРЮНОВУ Зою Яковлевну**
**с 85-летним ЮБИЛЕЕМ!**



*Мамочка наша родная, любимая!*
*Бабушка славная, незаменимая!*
*С днем рожденья тебя поздравляем,*
*Всяческих благ в твоей жизни желаем,*
*Чтоб ты никогда не болела,*
*Чтоб ты никогда не старела,*
*Чтоб вечно была молодой,*
*Веселой, доброй и нежной такой!*
*Целуем мы добрые, славные руки.*
*С любовью к тебе, твои дети и внуки.*

**Дети, внуки, правнуки.**

**Самую дорогую и любимую**
**КРЫМОВУ Галину Ивановну**
**С ЮБИЛЕЕМ!**



*Поверь, ведь ты у нас прекрасна,*
*И добротою своею, и умом.*
*Еще весельем, если в доме праздник,*
*И верностью, когда разлука в нем.*
*В день юбилея твоего*
*Шлем наши поздравления*
*И пожеланья счастья, здоровья и терпения!*

**Крестная, братья Макаровы.**

**Дорогого**
**МАКАРОВА Николая Ивановича**
**С ЮБИЛЕЕМ!**



*Желаем много счастья и света,*
*Много теплых и радостных дней.*
*Пусть душа твоя будет согрета*
*Добрым чувством родных и друзей.*

**Шуканов, Горшковы, Александровы.**

***● Вулакансен пултарулăхĕ***

## Савнă енĕм – Çĕмĕрле

Кĕвви Геннадий Юманайăн
Сăмахĕсем Анатолий Пояндаевăн

*Васкамасăр, çĕкленӳллĕ*




Нумай кĕвĕ кĕвĕлерĕм,
Сахал тунсăх сăвăлли.
Тăван кĕтес, пĕлеймерĕм,
Пур-ши санран кăмăлли?

**Хушса юрламалли:**
Кăмашасем, Хутар тавраш,
Юманайсем, турхансем.
Эскетенĕм, Ялтра, Улхаш –
Пурте пирĕн тăвансем.

Анлă Çавал шыв пуçĕнче
Чĕнтĕрлерĕ шур тумне.
Икĕ çыран уçланкинче
Венчет турĕ çуркунне.

**Хушса юрламалли:**

Хитре тумлă ĕçчен халăх
Куçса килнĕ çакăнта.
Анăçалла касса алăк
Телей тупнă вăрманта.

**Хушса юрламалли:**

Ыттисемшĕн пилĕк ĕмĕр
Эпир "тури чăвашсем".
Атте-анне, пиллесемĕр,
Ыр курар-и, ентешсем!

**Хушса юрламалли:**

Савăн, пуян тăван çĕрĕм,
Сăр – Çĕмĕрле тăрăхĕ.
Манăн паттăр ывăл-хĕрĕм
Ĕçре чапа тухтăр-и!

**Хушса юрламалли:**

***● Пĕлме интереслĕ***

### ШЫВ УКÇАРАН ХАКЛĂ

Британи климатологĕ Марек Кон Лондона тĕпе хурса XXII ĕмĕрти пысăк хула модельне тунă. Вăл вăхăтчен Çĕр çинчи вăтам температура ӳсет, халăх йышĕ темиçе миллиард нумайрах пулать.

Климатолог шучĕпе, ун чух хуласенче уçă вырăнсем юлмаççĕ, тӳремсемпе бульварсен тăррисене витеççĕ, парксемпе урамсенче пысăк йывăççем ӳсеççĕ. Çынсем ытларах урамра çӳреме тăрăшĕç, мĕншĕн тесен шăрăха пула хваттерти пӳлĕмсенче сывлама çук пăчă пулĕ, электроэнергие перекетлес шутпа кондиционерсемпе усă курма чарĕç. Автомобильсемпе транспортсен шучĕ тăрук чакнипе халăх ытларах çуран çӳреме тытăнĕ, çавăнпа симĕс курăкпа чечексем клумбăсенче кăна ӳсĕç. Асфальта шурă чулпа улăштарĕç, çурт стенисене хĕвел çутинче çутатакан материалсемпе витĕç. Юхан шывсем хĕрринчи тата çӳллĕ çуртсен сулхăнĕнче вырнаçнă çуртсем чи хаклисем пулĕç, ун чух бассейн, артезиан скважини пур çынсем чи пуяннисем шутланĕç. Сахал тупăшлă, типĕ вырăнсенчен тарнă çынсем чи чухăн районсенче кăна пурăнĕç, пысăк хулара вĕсене ĕçленĕшĕн ун чух ячĕшĕн кăна тӳлĕç.

## Куç ывăнсан

Куç ывăнсан, хĕрелсен марльăна шур чечек (ромашка) е шур чечек, укроп, пĕтнĕк (мята) шĕвекĕпе йĕпетсе куç çине хумалла. Çывăрма выртас умĕн вĕретнĕ шывпа е чей заваркипе куçа çуни питех те усăллă. Сăмах май, пĕчĕк хутаççемпе чей хатĕрленĕ чухне вĕсене пăрахма ан васкăр – куç харши, куç айне хурăр. Кăштахран куç айĕнчи ӳт çемçелнине, илемленнине туятăр. Ывăннă куçшăн та çак мел питех те лайăх.

Куç çивĕчлĕхне упрама, тĕрлĕ чиртен сыхлама кунне 2-3 хут куçа вĕренĕ шывра ирĕлтернĕ пыл (чĕрĕк кашăк пыла 1 кашăк шывра ирĕлтермелле) 2-шер тумлам тумлатмалла. Пыл ирĕлчĕкне сивĕтмĕшре 2-3 кун упрама юрать.

Сиплĕ тăм çинчен манмалла мар. Ăна турăхпа хутăштармалла. Çакнашкал аппликацисем 20 минутран сирĕн куç çинчи шлаксене тасатаççĕ.

Пит-куçа сивĕ шывпа çума хăнăхмалла. Çавăн пекех питĕ сивĕ шывпа сирпĕтни усăллă, ку хăйне майлă шыв массажĕ.

Нумайăшĕн куçĕ хăвăртах шывланать. 1 стакан шыва 1 чей кашăкĕ пан улми уксусĕ ярса яра куна ĕçмелле.

Петрушка тымарĕ куç чирĕсенчен сипленнĕ чухне пысăк вырăн йышăнть. Ăна тасатса аш арманĕпе авăртмалла, пыл, лимон сĕткенĕ хушмалла, пурне те пĕр виçепе илмелле. Апатчен 1 сехет маларах 1-ер чей кашăкĕ ĕçсен 2 уйăх иртсен куç лайăхрах курма пуçланине туйса илетĕр.

Çĕрле куçа 1-ер тумлам сырлан çăвĕ тумлатмалла.

Шăтарнă тулă куçшăн çав тери усăллă. Ăна час-часах çисен организм çамрăкланать, куç йăлтăртатма пуçлать. Рациона кăшман кĕртме тăрăшмалла. Унра куç çивĕчлĕхне ӳстерекен цинк пур.


## "Малалла" хаçата

**редакцире альтернативлă майпа çырăнма май пур. Ăна кирек хăш ĕç кунĕнче те 8.00 сехетрен пуçласа 17.00 сехетчен çырăнма пулать.**
**Подпискăна йĕркелесенех хаçата илме пултаратăр.**



ГУП ЧР «Шумерлинский издательский дом»

**МАЛАЛЛА**

ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА

**Директор-гл. редактор В.М. ХОХЛОВА.**

**Зам. главного редактора Н.П. ЧЕРНОВ.**

**УЧРЕДИТЕЛИ:**
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, Государственное унитарное предприятие ЧР "Шумерлинский издательский дом".

Газета зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ФС 18-2363 от 29.08.2005 г.



**НАШ АДРЕС:**
**429120, г.Шумерля, ул. Косточкина, 5.**
**E-mail: gazeta@cbx.ru**
**vpered7@mail.ru**

**ТЕЛЕФОНЫ:**
**Гл. редактор - 5-12-20, 5-42-19 (факс);**
**Зам. главного редактора, информационно-аналитический отдел, прием рекламы и объявлений - 5-02-52. Обозреватели по вопросам социально-экономического развития города и района - 5-43-14**
**Отдел компьютерной верстки - 5-05-95**
**Бухгалтерия - 5-03-53**



**Газета выходит по пятницам (на русском и чувашском языках).**



Рукописи не рецензируются и не возвращаются. Авторы опубликованных материалов несут ответственность за точность приведенных фактов, цитат и прочих сведений. Точка зрения редакции не обязательно совпадает с мнением авторов.

Материалы на правах рекламы публикуются под знаком (Р)

За содержание рекламных объявлений редакция ответственности не несет.

**Реклама, объявления, поздравления, соболезнования, благодарности публикуются только с предоплатой.**



**НАШИ БАНКОВСКИЕ РЕКВИЗИТЫ:**
**ИНН 2125004131**
**ОГРН 1022103028771**
**КПП 212501001**
**БИК 049700716**
**№ расч. сч. 40602810300000000062**
**№ корсч. 30101810000000000716**
**ГУП ЧР "Шумерлинский издательский дом".**

**Объем 1 п.л.**
**Печать офсетная**
**Индекс 31001.**
**Тираж 5934, в т.ч. на чувашском языке 299 экз.**
**Заказ № 1862.**

Газета сверстана в редакции. Время подписания газеты в печать по графику 17 часов. Номер подписан в 17 часов.

Выпуск газеты осуществлен при финансовой поддержке Агентства по печати и массовым коммуникациям РФ.

**Дежурный по номеру Н.П. ЧЕРНОВ.**

**Отпечатано в ГУП ЧР "Шумерлинский издательский дом": г.Шумерля, ул. Косточкина, 5**